## ÇИЛ-ТĂМАН

Арпашать çут тĕнче: умăмра те тăшман,
Те çăлма тухакан
хурăнташ-хунтăш ман ...
Саккăрла явăнса
çаврăнать çил-тăман,
Вăй та çук, май та çук
ăна хирĕç тăма.

Урам урлă йĕркен
выртса тухнă кĕртсем —
Картишне кĕреймен
вилнĕ шурă хурсем.
...Тен, çапла ир енне
майĕпен вăй пĕтсен,
Ӳкĕп те нихăçан та
тăраймăп, туссем.

Саккăрла явăнса
çаврăнăн самана
Унчченхи çул çине
кăларать-ши мана?
Шурă-шурă кĕртсем,
вилнĕ шурă хурсем —
Сăввăма кĕреймен
шурă шухашăмсем...

*Исмуков, Н. А. Çил тăман : [сăвă] // Исмуков, Н. А. Çăлри çăлтăрсем = Звезды в кладезе : [сăвăсем] / Н. Исмуков. – 2-мĕш хушса кăларнă кăларăм. – Шупашкар, 2011. – С. 8.*